# Чăваш автономийĕн пĕрремĕш утăмĕсем



Чăваш патшалăх истори архивĕн сăн ӳкерчĕкĕ

*Чăваш автономи облаçĕн хресчен, рабочи тата хĕрлĕ армеец Совечĕсен I съезчĕн делегачĕсем. (1920 ç.).*

***РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата Пĕтĕм Раççейĕн Ĕç Тăвакан Комитечĕ (Ĕçтăвком) 1920 çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш автономи облаçне (ЧАО) туса хурасси çинчен декрет кăларнă. Çав кун ăна никĕсленĕрenpe 99 çул çитнине паллă тăвăпăр. Облаç чăваш халăхĕн патшалăх форми пулнă. РСФСР Национальноçсен ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ ЧАО влаçĕ умне экономика, социаллă пурнăç, культура, литература, ӳнер, ытти ыйтăва татса пама тĕллев лартнă. Облаç хастарĕсем ĕçе партипе Совет органĕсене йĕркеленинчен пуçланă. Çакăн çинчен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ертсе пыракан наука сотрудникĕпе, истори наукисен кандидачĕпе Владимир Клементьевпа калаçатпăр.***

## Ревком ертсе пынипе

– Автономи тăвассишĕн хыпкаланса çӳреме çав кунран чылай маларах пуçланă. РКП/б/ Чăваш секцийĕсемпе ячейкисен 1920 çулхи нарăс уйăхĕн 4-8-мĕшĕсенчи пĕтĕм Раççейри I съезчĕ, Чăваш ĕç коммунине туса хумалли проекта ырланăскер, автономие ертсе пыма РКП/б/ Тĕп Комитечĕ çумĕнче Чăвашсен тĕп бюровне çирĕплетме ыйтнă. Чăн та, ку ĕмĕте çитерме май килмен. РКП/б/ Тĕп Комитечĕн йĕркелӳ бюровĕ çав çулхи çĕртме уйăхĕн 24-мĕшĕнче автономин Революци комитетне /Ревком/ çирĕплетнĕ, унта Д.Элмене /председатель/, В.Алексеева, Л.Лукина, И.Крынецкие, Я.Соснина кĕртнĕ. Ревком хăйĕн пĕрремĕш ларăвне утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче ирттерсе ĕçе пикеннĕ. ЧАО влаçĕн вăхăтлăх органĕсене йĕркелеме тытăннă. Çавнашкал йышăну кăларнă: «Элменĕн, Алексеевăн, Крынецкин, Соснинăн хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлама утă уйăхĕн 6-мĕшĕнчен пуçламалла, çакăн çинчен Пĕтĕм Раççейĕн Ĕç Тăвакан Комитетне, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариатне, çавăн пекех Тутар Социализм Совет Республикин Ревкомне, Чулхула кĕпĕрнин Ĕçтăвкомне, Чăваш автономи облаçĕн уесĕсен, вулăсĕсен тата ялĕсен Совечĕсен ĕçтăвкомĕсене пĕлтермелле…»

**– Вăхăтлăх ĕçтăвком аппаратне хăçан çирĕплетнĕ?**

– Утă уйăхĕн 7-мĕшĕнче. Ревком членне В.Алексеева /облаç управленийĕпе ĕç комиссариачĕн пайĕсем/, Шупашкар уесĕн ĕçтăвкомĕн явапллă сотрудникĕсене И.Вальдмана /халăха вĕрентес ĕç/, К.Григорьева /халăх хуçалăхĕн облаç Совечĕ/, Н.Железкова /çĕр ĕçĕ/, М.Бочарова /юстици/, Я.Соснина /сар комиссарĕ/, И.Дмитриева /сывлăх сыхлавĕ/, Г.Рафаилова /рабочи-хресчен инспекцийĕ/, С.Корушева /коммуналлă хуçалăх/, Н.Алексеева /революци трибуналĕн председателĕ/, Н.Раменские /апат-çимĕç комитечĕ/, Рыбакова /социаллă ытунсем/, А.Танкеевские /ветеринари/, Сивова /халăх сыхăнăвĕ/ заведующисем пулма çирĕплетнĕ.

**– Облаçра РКП/б/ организацине йĕркеленĕ-и?**

– Партин Хусан кĕпĕрнин комитечĕ çумĕнчи чăваш секцийĕн президиумĕ 1920 çулхи çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче РКП/б/ Тĕп Комитечĕ умне облаç комитетне туса хурас ыйтăва лартнă. Вăл Чăваш Енри парти организацийĕсен I конференцийĕ обкома суйласси çинчен йышăну кăлариччен вăхăтлăх комитет çирĕплетнĕ, унта РКП/б/ Шупашкар уесĕн комитечĕн членĕсене пурне те /Я.Соснин, И.Крынецкий, И.Вальдман, И.Пучков, К.Орлов/, Ревкомра тăракансене /Д.Элмен, В.Алексеев, Л.Лукин/, РКП/б/ Хусан кĕпĕрнин комитечĕ çумĕнчи чăваш секцийĕн членне /А.Лбов/ кĕртнĕ.

## Çĕршывран – кадрсем

**– ЧАО органĕсенче ĕçлеме çынсене ăçтан пуçтарнă?**

– Вĕсене шыраса тупса должноçа лартасси вăхăтлăх обкомпа Ревком умĕнчи чи малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри пулнă. Мускав облаçа ертсе пыраканĕçре Шупашкар уесĕн ĕçтăвкомĕн аппарачĕпе усă курма сĕннĕ. Элмен унпа çеç çырлахман, облĕçтăвком аппарачĕ валли кадрсем пухнă: РСФСР Национальноçсен ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Чăваш пайĕнчен, Мускавран, чăвашсем пурăнакан ытти регионтан. С.Коричев тăрăшнипе Чăваш пайĕн агитаторĕсене С.Перцева, П.Верхунова, Г.Ильина, М.Левина, Е.Табакова, Я.Иванова, М.Еремеева, В.Чакурина Ревком инструкторĕнче ĕçлеме куçарнă. Хĕрлĕ Çарăн Тĕп штабĕн командирсен резервĕнчи Д.Петров-Юмана, Чăваш Енре çуралса ӳснĕ, кайран тĕрлĕ енĕпе пĕлӳ илнĕ нумай çынна тата кандидатсем мĕнле нацирен пулнине пăхмасăр облаçа чĕнсе илсе ĕçе вырнаçтарнă. Чăваш пайĕ утă уйăхĕн /1920 ç./ пĕр эрнинче çеç Шупашкара кайма кăмăл тунă 200 яхăн специалиста шута илнĕ.

**– Вăхăтлăх Ĕçтăвком пайĕсене ертсе пынисен хушамачĕсене асăнаймăр-ши?**

– Пĕтĕм Раççейĕн Чрезвычайлă комиссийĕ сĕннипе облаçăн çакорганне ертсе пыма Мускавран Г.Гайдученко-Гордона, апат-çимĕç комиссарĕ пулма В.Базанова янă. Çĕр ĕç, сывлăх сыхлавĕн пайĕсен ертӳçисем, çар комиссарĕ, облаç милицийĕн пуçлăхĕ – Я.Ятманов /Етĕрне уесĕн ĕçтăвкомĕнчен куçнă/, А.Краснов /РСФСР Национальноçсен ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕ çумĕнчи Чăваш пайĕнчен/, И.Ефимов /Чĕмпĕр территори полк округĕн пуçлăхĕнчен/, Т.Волков /Тутар АССРĕн милици пуçлăхĕн пулăшуçинчен/. А.Ласточкин политкомиссар ĕç пайне, И.Милютин слесарь социаллă ыйтусене тата паракан пая, М.Кузьмин /Çеçпĕл Мишши/ 1920 çулхи авăн уйăхĕн 3-мĕшĕнчен революци трибуналне, каярахпа юстици пайне ертсе пыма тытăннă. Ревком авăн уйăхĕн 1-мĕшĕнче статбюро туса хунă, унăн пуçлăхĕ пулма Чăваш пайĕн сотрудникне Г.Иванова шаннă. Юпа уйăхĕн 13-мĕшĕнче И.Вальдман агронома халăха вĕрентес ĕç пайĕн ертӳçинчен кăларса тилхепене Варшава университетне пĕтернĕ И.Яштайкина лартнă. Центр халăх сыхăнăвĕн пайне ертсе пыма 1920 çулхи чӳк уйăхĕнче Чулхула кĕпĕрнинчен И.Колобова янă. Çапла вара Ревком чӳк уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне облĕçтăвком пайĕсене пурне те йĕркеленĕ. Заведующисенчен 8-шĕ – чăваш.

## Тилхепене Советсем тытнă

Юпа уйăхĕн 20-мĕшĕнчен ялсен, вулăссен, уессен Совечĕсене суйласа вырăнти влаç органĕсене йĕркелеме тытăннă. Чӳк уйăхĕн 7-11-мĕшĕсенче Шупашкарта облаçри хресчен, рабочи тата хĕрлĕ армеец Совечĕсен I съездне ирттернĕ. Унта – 134-ăн, çав шутра сасăлав ирĕклĕ 87 делегат, Пĕтĕм Раççейĕн Ĕçтăвкомĕн уполномоченнăйĕ А.Каменский, Наркомнацăн Чăваш пайĕнчен, Тутарстанпа Чĕмпĕр тăрăхĕнчи учреждениесенчен чăвашсем хутшăннă. Съезд Ревком отчетне итленĕ, халăха апат-çимĕçпе тивĕçтерессине, вĕрентессипе, сиплессипе, çĕр валеçессипе çыхăннă ыйтусене, экономика тăрăмне тишкернĕ, облаçра пурăнакансен ячĕпе халăха чĕнсе каланă. Советсен яланхи Ĕçтăвкомне 31 çынран çирĕплетнĕ. Пурте коммунистсем, 20-шĕ чăваш, 5-шĕ вырăс.

**– Ревкома хăçан пĕтернĕ?**

– Вăл 1920 çулхи чӳк уйăхĕн 11-мĕшĕнче юлашки лару ирттернĕ. Ĕçтăвком пленумĕ 13-мĕшĕнче облаçа ертсе пыма Ĕç Тăвакан Комитет президиумне суйланă: Д.Элмен /председатель/, С.Коричев /заместитель/, Л.Лукин, В.Алексеев, В.Базанов /членсем/, П.Михайлов /президиум секретарĕ/. Чӳкĕн 28-мĕшĕнче Ĕçтăвком Çеçпĕл Мишшине – юстици, Г.Герасимова – рабочи-хресчен инспекцийĕн, И.Крынецкие финанс пайĕсен заведующийĕсене, А.Лбова – ревтрибунал, Г.Гайдученко-Гордон урăх ĕçе куçнă май Чулхула облаçĕнчен куçса килнĕ И.Кадушина чрезвычайлă комисси председателĕсем пулма çирĕплетнĕ. Кадрсемпе çителĕклĕ тивĕçтерес тĕллевпе чӳк-раштав уйăхĕсенче Ĕçтăвком аппаратне улшăнусем кĕртнĕ. Хут пĕлменнисене вĕрентме чрезвычайлă комисси /председателĕ А.Андреев/, пичет пайĕ /заведующийĕ А.Суворов/, ытти çĕнĕ пай туса хунă, ĕç пайне ĕç комиссариачĕпе пĕрлештернĕ /заведующийĕ А.Ласточкин/. ЧАО Çулталăк вĕçĕнче облĕçтăвком пайĕсене коллегийĕсене çирĕплетнĕ. Вĕсенче тăнă 76 членран 32-шĕ РКП/б/ членĕ, 25-шĕ чăваш, 50-шĕ вырăс, 1 урăх нацирен пулнă. Чăвашсене аппарата сахалрах кĕртни квалификаци пĕчĕкреххине пĕлтернĕ. Ĕçтăвком çакна шута илсе тĕп халăх представителĕсене вĕрентсе кадрсем хатĕрлес тĕллев лартнă.

**– Советсен вырăнти органĕсен ĕçне хăш тапхăрта йĕркелесе янă?**

– 1920 çулхи юпа-чӳк уйăхĕсенче ялсен, вулăссен, уессен Совечĕсене çĕнĕрен суйланă хыççăн ĕçтăвкомĕсене çирĕплетнĕ. 1920 çулта 3 уеспа 46 вулăс ĕçтăвкомĕ, 1014 ял Совечĕ, 2021 çулта 4 уеспа 61 вулăс ĕçтăвкомĕ, 1245 ял Совечĕ шутланнă. 1923 çулта Советсене сахаллатнă май 1924 çулта 58 вулăс, 1055 ял Совечĕ пулнă.

## Чăваш Ен çĕрне мĕнле пуçтарнă?

**– Облаçăн администраци-территори тытăмне мĕнле калăпланă?**

– Халăх Комиссарĕсен Канашĕ тата Пĕтĕм Раççейĕн Ĕçтăвкомĕ 1920 çулта ЧАО туса хурасси çинчен кăларнă декретра облаçа хăш уессемпе вулăссем кĕрессине пайăррăн палăртнă. Анчах чикĕсем мĕнлерех пулмаллине хут çине ӳкерсе схема туса паман. Ăна хатĕрлеме тивнĕ. Çак кăткăс ĕçе пурнăçлама 1920 çулхи авăн уйăхĕнче Ĕçтăвком управленийĕн пайĕ çумĕнче административлă комисси йĕркеленĕ. 1921 çулта ăна пысăклатнă. Вăл чикĕсем еплерех пулассине, территорисене, ялсемпе хуласене, хăш наци çыннисем тата мĕнле йышпа пурăннине палăртса схемăсем хатĕрленĕ.

Ревком 1920 çулхи утă уйăхĕнче уессемпе вулăссене облаçа йышăнма тытăннă. Унта кашнине кĕртнине çирĕплетме актсем çырнă. Шупашкар уесне Хусан кĕпĕрнинчи Чикме /Козьмодемьянск/ уесĕнчи Пушкăрт, Мăн Тутаркас, Шурча, Мăн Сĕнтĕр, Мăнал вулăсĕсене кĕртнĕ. Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Пăва уесĕнчи Шамкай, Шăмăршă, Турхан, Мăрат, Хумпуç Патăрьел вулăсĕсене палăртнă уйăхрах Çĕрпӳ уесĕн ĕçтăвкомĕ йышăннă.

Пăва ĕçтăвкомĕ çав вулăссемпе пĕрлех чăвашсем пурăнакан Патăрьел вулăсне те йышăнма сĕннĕ. Декретра çав вулăса облаçа кĕртекеннисен хушшинче асăнман. Комисси ăна ЧАОна кĕртнине çирĕплетекен акт çырман, çапах Çĕрпӳ ĕçтăвкомне çитернĕ отчетра облаçа илнисен хушшинче асăннă. Облĕçтăвкомăн административлă комиссийĕ хăйĕн ячĕпе Çĕрпӳрен çитернĕ доклада хирĕçлемен, 1921 çулхи кăрлач уйăхĕнче çирĕплетнĕ.

Декретра Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи Кăрмăш уесĕнчи Çĕнĕ Атикасси, Мăн Улхаш, Кăрмăш вулăсĕсене облаçа парасси çинчен çырни пур. 1920 çулта Кăрмăш уесĕнче ултă вулăс пулнă: Мăн Улхаш, Çĕнĕ Атикасси, Хĕрлĕ Чутай, Пантьăк, Турхан, Хутар вулăсĕсем. 1918 çулхи çак улшăнусем çинчен РСФСР Ĕçтăвкомне вăхăтра пĕлтермен пулмалла. Апла пулин те вĕсене пурне те Етĕрне уесне илнĕ.

Территорисене облаçа кĕртес ĕç пур çĕрте те кал-кал пыман. Сăмахран, Кăрмăш уесĕн ĕçтăвкомĕ вулăссене Етĕрне уесне парас ыйтăва тăсса пынă. Ревком председателĕ Д.Элмен РСФСР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатне Кăрмăш ĕçтăвкомĕ ĕçе юриех тăсса пынине пĕлтернĕ, ĕçсене Чăваш облаçне памашкăн Кăрмăш уесне пĕр эрне хушшинче хушу çитерме ыйтнă. Çакăн хыççăн ыйтăва хăвăрт татса панă.

Декрета пурнăçласа Чăваш автономи облаçĕн территорине Шупашкар /17 вулăс/, Çĕрпӳ /19/, Етĕрне /20/ уесĕсенчен пуçтарнă. Унта Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ, Етĕрне хулисем, 1738 ял, 11,66 пин тăваткал километр çĕр кĕнĕ. 1920 çулта облаçра 804,8 пин, çав шутра хуласенче 19,7 пин /2,4%/, ялсенче 785,1 пин çын /97,6%/ пурăннă. Чăвашсен йышĕ – 80,5%, вырăссен – 11,5%, тутарсен – 3,9%, çармăссен – 3,6%, мордвасен 0,5%. Региона 1921-1925 çулсенче çĕнĕ çĕрсем хушнă пирки унăн лаптăкĕ пысăкланнă, пурăнакансен шучĕ ӳснĕ. 1921 çулта Тутар АССРĕнчен облаçа 64 ял /47,4 пин çын/ панă. Патăрьелпе Йĕпреç уесĕсене туса хунă. Халĕ Чăваш Ен территорийĕ – 18,3 пин тăваткал километр.

**Юрий МИХАЙЛОВ**
калаçнă